Муркаш район хаçачĕ

Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

31 (7775) № ✻ Юн кун, 2010 çулхи ака (апрель) уйăхĕн 28-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Республикăра

Эфирта – Президент

Раççей Правительствин Председателĕн В.В. Путинăн Шупашкар гидроузелĕн строительствине вĕçлемелли документацие хатĕрлесси çинчен калакан хушăвĕ Чăваш Ене мĕн парать? Çакă – Чăваш Ен Президенчĕпе Николай Федоровпа Александр Белов журналист калаçăвĕн тĕп темисенчен пĕри. «Чăваш Ен» патшалăх телерадиокомпанийĕн студийĕнче вĕсем пурăнмалли çуртйĕрпе коммуналлă хуçалăхăн пулăшу ĕçĕсен тарифĕсен ӳсĕмĕпе, пассажирсене саккуна пăсса илсе çӳрекенсемпе кĕрешессипе, Çĕнтерӳ кунне тата Республика кунне хатĕрленессипе çыхăннă ыйтусене те сӳтсе явĕç.

Çак калаçава талăкĕпех ĕçлекен «Раççей-24» информаци каналĕн эфирĕнче ака уйăхĕн 28-мĕшĕнче 19.20 сехетре, «Раççей-1» телеканалпа çу уйăхĕн 2-мĕшĕнче 11.10 сехетре пăхăр. Аудиоверсие Раççей радиовĕ ака уйăхĕн 27-мĕшĕнче 18.39 сехетре тата ака уйăхĕн 28-мĕшĕнче 12.20 сехетре эфира кăларать.

Районти çамрăксем

Тăрăшулăхпа палăрать

Сăн ӳкерчĕкре эсир Муркашри кирпĕч заводĕнче нумай пулмасть ĕçлеме тытăннă Владислав Юрьевич Андреева куратăр. Вăл кунта экскаватор машинисчĕн пулăшаканĕнче тăрăшать. Çамрăк пулин те, хăйĕн ĕçне тимлесе пурнăçлать. Хушнă ĕçшĕн ответлăха çирĕп туять.

В. ШАПОШНИКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.

Çур аки

Ĕçсем сарăлса пыраççĕ

Районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче çурхи тĕш тырăпа пăрça йышши культурăсен вăрлăхĕсене 2090 тонна имçамлама палăртнă пулсан, çак вăхăта 310 тонна имçамланă. Ку вăл 11,1 процент пулать.

Çĕр улми вăрлăхне 2640 тонна (57,6 процент) суйласа яровизацилеме хунă. Ку енĕпе «Восток», «Свобода», Чапаев ячĕпе хисепленекен пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем, «ВаСем» чикĕллĕ яваплăхлă общество, С.К. Сретинскийăн, А.И. Толстовăн хресчен (фермер) хуçалăхĕсем ăнăçлă ĕçлесе пыраççĕ.

Кĕрхи культурăсене пĕтĕмпе 6752 гектар çинче акса хăварнă пулнă. Вăл шутран 4064 гектарĕ (60,2 процент) юрăхсăра тухнă.

Кĕрхи культурăсене районĕпе 772 гектар çинче (28,7 процент) минераллă удобренисемпе апатлантарнă. «Восток», Ильич ячĕпе хисепленекен, «Свобода», «Оринино», Чкалов ячĕпе хисепленекен пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикинче ку ĕçе вĕçленĕ ĕнтĕ.

Кĕрхи культурăсене 832 гектар çинче (31 процент) сӳрелесе нӳрĕке хупласа хăварнă. «Восток», Ильич ячĕпе хисепленекен, «Оринино», «Свобода», Чкалов ячĕпе хисепленекен хуçалăхсенче, «ВаСем» чикĕллĕ яваплăхлă обществăра, С.К. Сретинскийăн хресчен (фермер) хуçалăхĕнче, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикинче кĕрхи культурăсене сӳрелесе пĕтернĕ.

Нумай çул ӳсекен курăксене 1030 гектар çинче (10,6 процент) минераллă удобренисемпе апатлантарнă, 3484 гектар (35,8 процент) сӳреленĕ.

Çĕртме пуссисене 2266 гектар çинче (28,2 процент) сӳрелесе хăварнă.

Çурхи культурăсем акма культиваци туса çĕр хатĕрлес ĕçсене пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенчен Е. Андреев ячĕпе хисепленекен, «Волга», «Восток», «Герой», Ильич ячĕпе хисепленекен, «Свобода», Чкалов ячĕпе хисепленекен хуçалăхсенче, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикинче йĕркеленĕ.

Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăхра 100 гектар çинче (100 процент) çурхи тулă акса хăварнă.

Апрелĕн 29-мĕшĕ – Чăваш Республикин патшалăх символĕсен кунĕ

Патшалăх влаçĕн паллисем

Чăваш Республикин Патшалăх Ялавĕ, Патшалăх Гербĕ тата республика Патшалăх Гимнĕ республика влаçĕн саккунпа çирĕплетнĕ ятарлă атрибутĕсем пулса тăраççĕ. Вĕсем ăна официаллă лару-тăрура тата тĕнче шайĕнче палăртаççĕ. Патшалăх символĕсен право статусне тата вĕсемпе усă курассин право хутшăнăвĕсене Чăваш Республикин 1997 çулта йышăннă «Чăваш Республикин патшалăх символĕсем çинчен» саккунĕнче çирĕплетнĕ.

Чи малтанах республикăн Патшалăх символĕсем – Гербĕ тата Ялавĕ – пуррине Чăваш АССР-ĕн 1926 çулхи январĕн 31-мĕшĕнче йышăннă Конституцийĕнче палăртса хăварнă. Унччен вара влаç органĕсен пичечĕсемпе бланкĕсем çинче РСФСР патшалăх Гербне ӳкерни, унтах Чăваш автономи облаçĕ пирки чăвашла тата вырăсла çырса хунисем пулнă.

1992 çулхи апрель уйăхĕнче Чăваш Республикин Аслă Канашĕ конкурс иттернĕ май тата анлăн сӳтсе явнă хыççăн Патшалăхăн хальхи Гербне тата Ялавне, Патшалăх Гимне йышăннă. 1992 çулхи февралĕн 15-мĕшĕнче вара Г.С. Лебедевăн «Тăван çĕр-шыв» юррин кĕввине Чăваш Республикин Патшалăх Гимне хывасси пирки йышăну тунă. Гимна 1992 çулхи июнĕн 24-мĕшĕнчен тытăнса эфира кăларма йышăннă.

2004 çулхи апрелĕн 8-мĕшĕнче Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В. Федоров «Чăваш Республикин патшалăх символĕсен кунĕ çинчен» Указне алă пуснă. Унпа килĕшӳллĕн апрелĕн 29-мĕшĕ Чăваш Республикин патшалăх символĕсен кунĕ пулса тăрать.

Çак куна паллă тунă май республикăри аслă вĕренӳ заведенийĕсенче асăннă тематикăпа 30 мероприятие яхăн иттерме палăртнă. Акă апрелĕн 29-мĕшĕнче Санкт-Петербургри патшалăх инженерипе экономика университечĕн филиалĕнче савăнăçлă лару-тăрура патшалăх символĕсен залне уçаççĕ, И.Н. Ульянов ячĕпе хисепленекен Чăваш патшалăх университетĕнче студентсемпе преподавательсем хушшинче «Ульяновец» хаçат парнисене çĕнсе илессишĕн эстафета иртет. Ăна Аслă Отечественнăй вăрçăра Çĕнтерӳ тунăранпа 65 çул çитнине тата Чăваш Республикине туса хунăранпа 90 çул çитнине халаллана.

Чăваш Республикин патшалăх символĕсен кунне халалласа районта та тĕрлĕ мероприятисем сахал мар иттерме палăртнă. Сăмахран, библиотекăсенче ку ятпа кĕнекесен выставкисене йĕркелеççĕ, кунпа пĕрлех информаци сехечĕсем иттерессине пăхса хунă. Культура учрежденийĕсенче иттерме палăртнă ытти тĕрлĕ мероприятисем те чылай.

Хамăр инф.

Кану кунĕсем

Виçшер кун канăпăр

Май уйăхĕнче пирĕн икĕ уяв кунĕ кану кунĕсемпе пĕр килет. Майăн 1-мĕшĕ – шăмат кун, майăн 9-мĕшĕ – вырсарни кун. Ĕç кодексĕпе килĕшӳллĕн вара уяв кунĕ канмалли кунпа пĕр килнĕ чухне канма хыççăнхи ĕç кунне хушса параççĕ. Çапла вара майăн 1,2 тата 3-мĕшĕсенче каннă хыççăн ĕçе 4-мĕшĕнче тухмалла пулать. Аслă Çĕнтерӳ кунĕ чухне те майăн 8,9 тата 10-мĕшĕсенче – канмалли кунсем. Хыççăн майăн 11-мĕшĕнче ĕçе тухмалла. Апрелĕн 30-мĕшĕ вара – уяв умĕнхи кун пулнă май, ĕç кунĕн вăхăчĕ 1 сехет кĕскелет.

Çапла пĕлтернĕ Роструд ертӳçин çумĕ Иван Шкловец ИТАР-ТАСС корреспондентне.

Обществăлла организацисенче

Тимлĕх вĕсене ытларах кирлĕ

Çак кунсенче Пĕтĕм Раççейри куç курманнисен обществи 85 çул, унăн пирĕн республикăри организацийĕ йĕркеленнĕренпе 80 çул çитрĕ. Çак кунсене халалласа йĕркеленĕ мероприяти иртнĕ юн кун пĕрлехи информаци кунĕпе пĕр килчĕ. Çавăнпа район администрацийĕн ырă йăласен залĕнче пуçтарăннă Муркаш тата Элĕк районĕсенчи куç курман инвалидсемпе тĕл пулчĕ информаци кунне хутшăннă 4-мĕш ушкăн.

Çакна палăртмалла. Хăйсен организацийĕн юбилей уявне куç курманнисем хăйсем тунă ал ĕçĕсенчен курав йĕркеленĕ. Калайкассинчи В.Ф. Горлановăпа Р.И. Беляева (Калайкасси), А.В. Столярова (Турхан), М.Н. Пушкарева (Чăршă), В.Н. Пагеев (Хунтăкасси), А.В. Никитина (Анат Карачура, Элĕк районĕ), В.Н. Клементьева (Тушкасси), Е.А. Пушкина (Москакасси) çыхнă, ăсталанă хатĕрсем тĕлĕнмелле илемлĕ пулса тухнă.

Куç курманнисен Пĕтĕм Раççейри обществин Чăваш Республикинчи организацийĕн ертӳçи Ю.Е. Сергеев республикăра куç курманнисен обществин вырăнти организацийĕсем хушшинче иттернĕ конкурсра Муркаш районĕнчи организаци 2 вырăн йышăннине пĕлтерчĕ, диплом пачĕ. Чăннипех те, куç курманнисен вырăнти организацине кĕрекенсем обществăлла ĕçсене хастар хутшăнаççĕ. Республикăра мĕнле конкурс иртет – унта Муркашсем. Хутшăнаççĕ çеç мар, малти вырăнсене йышăнаççĕ. Çак кун хастар инвалидсене Муркаш район пуçлăхĕн Тав çырăвĕсемпе, Пĕтĕм Раççейри куç курманнисен пирĕн республикăри организацийĕн, Элĕк район администрацийĕн Хисеп грамотисемпе, куç курманнисен вырăнти организацийĕн бюровĕн Тав çырăвĕсемпе, парнесемпе чысларĕç. Куç курманнисен обществин пирĕн районти организацийĕн ертӳçи А.Д. Михайлова обществăн организацийĕпе паллаштарчĕ, тĕрлĕ çулсенче вырăнти организацие ертсе пыракансене те ырăпа асăнчĕ.

Юлашкинчен пуçтарăннисене районти Культура çурчĕ çумĕнчи Ю. Жуков ертсе пыракан «Илем» агитбригада ушкăнĕ илемлĕ юрăсемпе кăмăла уçрĕ.

Сăмахăма вара куç курманнисен вырăнти организацийĕн секретарĕнче ĕçлекен Е.Ф. Никитинăн шухăшĕпе вĕçлес килет.

– Кунта ĕçлеме пуçласанах куç курман инвалидсем мĕн туйнине ăнланас тесе çур кун пĕтĕм ĕçе хупă куçпа турăм. Чăтса çитереймерĕм, тепĕр çур кунне куça уçса ĕçлерĕм. Куç курман инвалидсем хĕвел çутине те кураймаççĕ вĕт? Апла пулин те пурнăç илемне туйма, пурнăçа хаклама пĕлеççĕ, – терĕ Елена Флегентовна.

Л.ПАВЛОВА.

Юбилей

Саламлатпăр

Хаклăран та хаклă çыннăмăра, аннене, хунямана, кукамая – 1 Май выçăлккинче пурăнакан **Мария Порфирьевна СОРОКИНĂНА** 80 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр. Çак тапхăрта хăйĕн ĕмĕрĕнче тем те тӳссе чĕре витĕр кăларнă пулĕ. Пĕр ывăлпа виçĕ хĕр ӳстерсе вĕсене пурнăç çулĕ çине тухма пулăшнă. Юман пек çирĕп сывлăх, чăваш сурпанĕ пек вăрăм ĕмĕр сунатпăр, телейӳпе ăнăçу юнашар çӳреччĕр, ĕмĕтӳсем çитсе пыччăр, çемйӳнте татулăхпа килĕшӳ пултăр.

Саламлаканĕсем: ывăлĕ, виçĕ хĕрĕ, кинĕ, кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, тăванĕсем.

Юратнă мăшăрăма, хаклă хĕрĕме, кăмăллă кинĕме, ытарайми аннене, çепĕç чунлă кукамая, тараватлă тăхлачăна, хисеплĕ тăванăмăра – Мăн Çĕнтĕр салинче пурăнакан, ачасене вĕрентес ĕçре вăй хуракан **Валентина Георгиевна КИРПИЧНИКОВĂНА** 55 çулхи юбилей ячĕпе чи ăшă сăмахсемпе чĕререн саламлатпăр. Пурнăçунта пĕтĕм ыррине кăна сунатпăр.

Саламлаканĕсем: амăшĕ, мăшăрĕ, хуньамăшĕ, ачисем, кĕрĕвĕ, мăнукĕсем, тăхлачи, Артем çемйипе, Яшмолкинсен, Шуйцевсен, Алешкинсен, Грачевсен çемйисем.

Приглашает общественная приемная

С апреля 2010 года начала свою работу общественная приемная представителя уполномоченного по правам ребенка в Чувашской Республике по Моргаушскому району Ванеркина Николая Григорьевича.

Прием граждан будет проходить каждый первый и третий четверг месяца с 13-00 до 15-00 часов по адресу: с. Моргауши, ул. Мира 9А, общественная приемная Всероссийской политической партии «Единая Россия». 5-14.